КСК(О)У«ЦИВИЛЬСКАЯ СПЕЦИАЛЬНАЯ (КОРРЕКЦИОННАЯ) ОБЩЕОБРАЗОВАТЕЛЬНАЯ ШКОЛА-ИНТЕРНАТ №2»
МИНИСТЕРСТВА ОБРАЗОВАНИЯ И МОЛОДЕЖНОЙ ПОЛИТИКИ ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

# «САРМАНТЕЙ» сказка

***Выполнила: учитель чувашского языка***
***КС(К)ОУ «Цивильская специальная (коррекционная) школа-интернат№2»***
***Николаева Наталия Алексеевна***

25 апреля

# ДЕНЬ ЧУВАШСКОГО ЯЗЫКА

# ИВАН ЯКОВЛЕВИЧ ЯКОВЛЕВ




ИВАН ЯКОВЛЕВ
ДЕТСКИЕ РАССКАЗЫ


ВЫРТМАРА


АЧА-ПАЧА КАЛАВĔСЕМ
ДЕТСКИЕ РАССКАЗЫ


УТĂРА


САРМАНТЕЙ








# САРМАНТЕЙ



Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă;




ăна шăши пынă та   хӳрипе çапса çĕмĕрнĕ



Сармантей те йӗрет, сарӑ чӑххи те какалать



Хапхи калать: - Манăн та уçăлса хупăнас, - тет.





Анать вăкăр шыва куллен-кун.

- Хапха, эсĕ мĕншĕн уçăлса хупăнатăн? — тет.

- Уçăлса хупăнмасăр, — тет. - Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă; ăна шăши пынă та хӳрипе çапса çĕмĕрнĕ. Сармантей те йĕрет, сарă чăххи те какалать Вăкар калать: - Манăн та мĕкĕрсе анас, — тет. Мĕкĕрсе анать шыв хĕррине.





Шыв калать:
 - Мĕншĕн, вăкар, мĕкĕретĕн?
 - Мĕкĕрмесĕр, — тет. — Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă; ăна шăши пынă та хӳрипе çапса çĕмĕрнĕ. Сармантей те йĕрет, сарă чăххи те какалать, хапхи те уçăлса хупăнать.





Шыв калать:
- Манăн та хумханас, — тет. Пĕр çĕнĕ çын шыв ăсма анать:
- Шыв, мĕншĕн хумханатăн? — тет.
- Хумханмасăр, — тет. — Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă; ăна шăши пынă та хÿрипе çапса çĕмĕрнĕ. Сармантей те йĕрет, сарă чăххи те какалать, хапхи те уçăлса хупăнать, вăкăрĕ те мĕкĕрет, тет.





Çĕнĕ çын калать:

- Манăн та пĕр витрине çапса çĕмĕрес, [illegible] трине. Киле таврăнать. Хунямăшĕ чуста çăрать.
- Кин, мĕншĕн хăрах витрепе анчах ăсса килтĕн? — тет.
- Ăсса килмесĕр, — тет. — Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă; ăна шăши пынă та хӳрипе çапса çĕмĕрнĕ. Сармантей те йĕрет, сарă чăххи те какалать, хапхи те уçăлса хупăнать тет, вăкăрĕ те мĕкĕрет, шыв та хумханать, тет.





Хунямашĕ калать:
- Манён та чустана кăларса ывăтас, — тет. Кăларса ывăтать.
Ывалĕ кайнă вăрмана. Таврăнать вăрмантан. Ывăлĕ калать:
- Мĕншĕн яшка пĕçермерĕр? — тет. Амăшĕ калать:

- Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă; ăна шăши пынă та хӳрипе çапса çĕмĕрнĕ. Сармантей те йĕрет, сарă чăххи те какалать, хапхи те уçăлса хупăнать тет, вăкăрĕ те мĕкĕрет, шыв та хумханать, çĕнĕ çын та хăрах витрине çапса çĕмĕрнĕ.

.





Ывалĕ калать:

- Манăн та хăрах атта кăларса ывăтас, — тет. Кăларса ывăтать
Пĕтрĕ.



Сывё пулёр: ачасем
Тепре т.л пуличчен!